ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНӖСЕНЕ ПАТШАЛĂХĂН УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИЙӖСЕНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КӖРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене патшалăхăн уйрăм полномочийĕсене парасси çинчен" 2006 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 55 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 84, 85 №-сем; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 6, 12 №-сем; 2014, 5, 6, 11 №-сем; 2015, 12 №; 2016, 10, 12 №-сем; 2017, 3, 7 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 28-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк

уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000244 №; "Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕ, 0000000000000736 №, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000760 №; "Республика" хаçат, 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2024, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 16-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 11-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьян 1-мĕш пайĕнче:

а) 16-мĕш пунктра "Херсон тата Запорожье облаçĕсен" сăмахсем хыççăн "(малалла – ятарлă çар операцине хутшăнакансем)" сăмахсем хушса хурас, "(малалла тивĕçлĕн – ятарлă çар операцине хутшăнакансем, Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи вĕренӳ çинчен" саккунĕ)" сăмахсене "(малалла – Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи вĕренӳ çинчен" саккунĕ)" сăмахсемпе улăштарас;

ă) çакăн пек çырса 17-мĕш пункт хушса хурас:

"17) Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсене тата Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан, вĕренӳ ĕç-хĕлне пурнăçлакан организацисен тулашĕнче (çемьери вĕренӳ формипе, хăй тĕллĕн вĕренмелли формăпа) пĕлӳ илекен ачасене (вĕсем пурте ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен, çав шутра ятарлă çар операцине хутшăнса пуçĕсене хунă (вилнĕ) çынсен, çемйисен членĕсем шутланаççĕ) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене (малалла çавăн пекех – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсем) тӳлесси.

Муниципаллă округсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсене тата Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан, вĕренӳ ĕç-хĕлне пурнăçлакан организацисен тулашĕнче (çемьери вĕренӳ формипе, хăй тĕллĕн вĕренмелли формăпа) пĕлӳ илекен ачасене (вĕсем пурте ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен, çав шутра ятарлă çар операцине хутшăнса пуçĕсене хунă (вилнĕ) çынсен, çемйисен членĕсем шутланаççĕ) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлемелли йĕркене тата условисене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.";

2) çакăн пек çырса 14^{20} статья хушса хурас:

"14^{20} статья. **Муниципаллă округсен тата хула округĕсен бюджечĕсене Чăваш Республикин территорийĕнче выр-**

наçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсене тата Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан, вĕренӳ ĕç-хĕлне пурнăçлакан организацисен тулашĕнче (çемьери вĕренӳ формипе, хăй тĕллĕн вĕренмелли формăпа) пĕлӳ илекен ачасене (вĕсем пурте ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен, çав шутра ятарлă çар операцине хутшăнса пуçĕсене хунă (вилнĕ) çынсен, çемйисен членĕсем шутланаççĕ) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлама уйăрса паракан субвенцисен пĕтĕмĕшле калăпăшне палăртмалли йĕрке

1. Муниципаллă округсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсене тата Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан, вĕренӳ ĕç-хĕлне пурнăçлакан организацисен тулашĕнче (çемьери вĕренӳ формипе, хăй тĕллĕн вĕренмелли формăпа) пĕлӳ илекен ачасене (вĕсем пурте ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен, çав шутра ятарлă çар операцине хутшăнса пуçĕсене хунă (вилнĕ) çынсен, çемйисен членĕсем шутланаççĕ) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе (малалла çавăн пекех – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлесси) çак Саккунăн 1 статйин 1-мĕш пайĕн 17-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн паракан Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлама кирлĕ укçа-тенкĕне Чăваш Республикин республика бюджетĕнче Чăваш Республикин черетлĕ финанс çулĕнчи тата планпа пăхнă тапхăрти республика бюджечĕ çинчен калакан Чăваш Республикин саккунĕпе çирĕплетекен калăпăшпа субвенцисем евĕр пăхса хăвараççĕ.

2. Муниципаллă округсен тата хула округĕсен бюджечĕсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлама Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен уйăрса паракан субвенцисен пĕтĕмĕшле калăпăшне (V_{sv}) çак формулăпа палăртаççĕ:

$$V_{sv} = \sum_{i=1}^{n} S_i,$$ăçта:

S_i – кирек хăш i-муниципаллă округăн е хула округĕн бюджетне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе Чăваш Респуб-

ликин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлама уйăрса паракан субвенцисен калăпăшĕ;

n – муниципаллă округсен тата хула округĕсен (вĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене панă) шучĕ;

i – муниципаллă округ е хула округĕ.

3. Кирек хăш i-муниципаллă округăн е хула округĕн бюджетне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлама уйăрса паракан субвенцисен калăпăшне (S_i) çак формулăпа палăртаççĕ:

$S_i = КО_i \times R \times 12 + Z_i$, ăçта:

$КО_i$ – i-кирек хăш муниципаллă округри е хула округĕнчи Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсен тата Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан, вĕренӳ ĕç-хĕлне пурнăçлакан организацисен тулашĕнче (çемьери вĕренӳ формипе, хăй тĕллĕн вĕренмелли формăпа) пĕлӳ илекен ачасен (вĕсем пурте ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен, çав шутра ятарлă çар операцине хутшăнса пуçĕсене хунă (вилнĕ) çынсен, çемйисен членĕсем шутланаççĕ) (малалла çавăн пекех – ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен çемйисен членĕсем шутланакан вĕренекенсем) шучĕ;

R – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕпе палăртнă Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕн виçи;

12 – çулталăкри уйăхсен шучĕ;

Z_i – i-кирек хăш муниципаллă округăн е хула округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе панă Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлакан служащийĕсене тытса тăма каякан тăкаксем, çулталăкра;

$Z_i = КС_i \times 12$, ăçта:

$КС_i$ – i-кирек хăш муниципаллă округăн е хула округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес енĕпе панă Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлакан служащийĕсене тытса тăма каякан тăкаксем, пĕр уйăхра;

$КС_i = Ксл_i \times МРОТ \times S_{взн}$, ăçта:

$Ксл_i$ – i-кирек хăш муниципаллă округăн е хула округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлес

енĕпе панă Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлакан служащийĕсен шучĕ, ăна ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен çемйисен членĕсем шутланакан 1000 вĕренекен пуçне 1 штат единици шайĕнче шутласа палăртаççĕ;

$Ксл_i = КО_i / 1000$;

МРОТ – ĕç укçин чи пĕчĕк виçи;

$S_{взн}$ – патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсене хывакан страхлав тӳлевĕсем.";

3) 17 статьян 1-мĕш пайĕн 3-мĕш пунктне çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсене тата Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан, вĕренӳ ĕç-хĕлне пурнăçлакан организацисен тулашĕнче (çемьери вĕренӳ формипе, хăй тĕллĕн вĕренмелли формăпа) пĕлӳ илекен ачасене (вĕсем пурте ятарлă çар операцине хутшăнакан çынсен, çав шутра ятарлă çар операцине хутшăнса пуçĕсене хунă (вилнĕ) çынсен, çемйисен членĕсем шутланаççĕ) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕсене тӳлессине;".

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулин
2024 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ
94 №